25-мĕш çул тухать. Хакĕ 15 пус.

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

1942 АВГУСТ 14 ЭРНЕКУН 189 (6124) №

Чăваш Коммуни

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔ, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

Уборкăри ĕçсен хăвăртлăхне ӳстерер

Августăн 10-мĕш тĕлне республикăри колхозсенче кĕрхи тырăсемпе пучахлă суртрисене пĕтĕмпе 162.389 гектар вырнă, çакă вăл плана 37,4 процент тултарни пулать.

Малта çак районсем пыраççĕ: Хĕрлĕ Чутай районĕ (48 процент вырса пуçтарнă), Вăрмар (46 процент), Калинински (45,6 процент), Чкаловски (43,4 процент), Тăвай (43,4 процент). Кая юлакансем: Сĕнтĕр (25,8 процент), Йĕпреç районĕ (27,4 процент вырса пуçтарнă), Элĕк (29,1 процент), Улатăр (29,4 процент).

Августăн иккĕмĕш пилĕккунлăхĕнче республикăри уборка ĕçĕсен хисепĕ пĕтĕмĕшпе 19,3 процент ӳснĕ. Вăрçă вăхăтĕнчи условисенче ĕçĕн çакăн пек хăвăртлăхне ниепле те çителĕклĕ тесе шутлама çук. Чылай районсем, уборка ĕçĕсене вăрçăн хаяр обстановки ыйтнă пек васкатас вырăнне, хирти ĕçсен хăвăртлăхне чакарнă, республикăри вăтам хисеп чухлĕ ӳсĕм парайман. Улатăр районĕнче, сăмахран, иккĕмĕш пилĕккунлăхра тунă ĕçсен хисепĕ 12,7 процент кăна ӳснĕ, Элĕк районĕнче 14,9 процент, Йĕпреç районĕнче 16,4 процент, Сĕнтĕр районĕнче 17,2 процент кăна ӳснĕ. Иккĕмĕш пилĕккунлăхра тырпулсене пухса кĕртес ĕçĕн хăвăртлăхне Кувакино районĕ питех те чакарса янă. Вăл пĕтĕмпе те 11 процент кăна ӳсĕм панă. Çав вăхăтрах Сĕнтĕрвăрри, Хĕрлĕ Чутай районĕсенче пилĕккунлăхра тунă ĕçсен хисепĕ 28—29 процент ӳснĕ.

Йĕпреç районĕнче (ВКП(б) райкомĕн секретарĕ Артемьев юлташ, райсовет исполкомĕн председателĕ Алексеев юлташ), Элĕк районĕнче (Кузьминпа Филимонов юлташсем), Улатăр районĕнче (Киреевпа Вислобоков юлташсем), Сĕнтĕр районĕнче (Гусевпа Угольников юлташсем), Ишлей районĕнче (Сидоровпа Херсонов юлташсем) тырпулсене пухса кĕртес ĕçсен хăвăртлăхĕсем тӳсме çук начар пулнине çав районсенче комбайнсемпе тата тырă вырмалли çăмăл машинăсемпе питĕ япăх усă курнипе ăнлантарса памалла. Нумай колхозсенче халиччен те тырра çурлапа кăна выраççĕ. Çав районсен руководителĕсем, машинăсене хирĕçле шухăш-кăмăлсемпе кĕрешес вырăнне, хăйсем çав шухăш-кăмăлсен тыткăнне лекнĕ.

ВКП(б) райкомĕсен секретарĕсем: Йĕпреç райкомĕн—Артемьев юлташ, Элĕк—Кузьмин юлташ, Улатăр—Киреев юлташ, Сĕнтĕр—Гусев юлташ, Ишлей—Сидоров юлташ мирлĕ вăхăтри шухăш-кăмăлсене халиччен те пĕтермен. Хăйсен ĕçĕсене хакланă чухне вĕсем халĕ те-ха иртнĕ çулти ĕçсемпе танлаштараççĕ тата кăçалхи çул иртнĕ çулти хăвăртлăхсемпех ĕçлеме пулать тесе шутлаççĕ. Çакă вăл каçармалла мар сиенлĕ шухăш. Халĕ урăх вăхăт. Çĕршыв умне тухса тăнă хăрушлăх çивĕчленчĕ. Çав хăрушлăха сирсе ярас тесен, тылра татах та ытларах вăй хурса ĕçлемелле, уборкăна иртнĕ çултинчен нумай хăвăртрах та пысăкрах пахалăхпа туса ирттермелле.

Тырă вырас ĕç пуçланнă кунсенчех республикăри хаçатсенче Сĕнтĕр, Йĕпреç, Элĕк районĕсенче уборка ĕçĕсене начар ертсе пыни çинчен чылай сигналсем пулчĕç. Анчах çав районсен руководителĕсем паянхи куна çитсе те çавăнтан хăйсене валли тивĕçлĕ выводсем туман. Районсем уборкăра кая юлса пынине пĕтерес ĕçе партипе комсомол организацийĕсене, вырăнти советсене тивĕçлипе мобилизацилемен. Партипе совет активĕ халĕ те район центрĕсенчех ларса ирттерет, уборка ĕçĕсем намăсла вăраххăн пынипе килĕшсе пурăнать. Партин Элĕк тата Йĕпреç райкомĕсем хăйсен районĕсем уборкăра юлса пыни çинчен уççăн калаçма хăйсемшĕн аплах мар тесе шутлаççĕ пулас. Çакă вăл уборка пуçланнăранпа Йĕпреç районĕн хаçатĕнче районри колхозсем уборкăра çителĕксĕр ĕçлени çинчен пĕр сăмах та шарламаннинчен те лайăх курăнать. Çитменлĕхсем нумай, вĕсем çинчен хыттăн калаçмалла пулнă. Районри хаçат уйрăм колхозсене çиелтен кăна критикăлать, пĕтĕм районри ĕçсем мĕнле пыни çинчен вулакансем вара пĕлмеççĕ. Элĕк районĕнчи хаçат хăйĕн умстатьинче район уборкăна «организованно» туни çинчен шавлама тытăнса, малтанхи кунсенчех тĕрĕс мар çул çине тăчĕ. Йĕпреç тата Элĕк районĕсенчи хаçатсен редакторĕсем Михайловпа Саперкин юлташсем ВКП(б) Центральный Комитечĕ пичетĕн кăçалхи уборка ĕçĕнчи задачисем çинчен кăтартса панисене ăнланса илменни курăнса тăрать. Парти райкомĕсем вара çав фактсене курмасăр ирттерсе янă.

Вăрçă обстановки парти райкомĕсен мĕнпур секретарĕсенчен, МТС политотделĕсен начальникĕсенчен, комсомол райкомĕсен секретарĕсенчен, райсовет исполкомĕсен председателĕсенчен, райçĕрĕç пайĕсемпе МТС руководителĕсенчен тырпулсене пухса кĕртес ĕçе хăвăрт тата пысăк пахалăхпа туса ирттермешкĕн мĕнпур вăйсене мобилизацилеме ыйтать. Районри парти активне, советпа комсомол работникĕсене уборка ĕçне ямалла, çапла ĕçлесе вăрçăпа хуçалăх тĕлĕшĕнчи чи кирлĕ задачăсене пурнăçа кĕртессине татса памалла. Уборка—сезонра тумалли ĕç, кунта кашни сехет, кашни кун ĕçе татса парать. Уборкăна вăраха яни — çĕршывшăн хальхи вăхăтра снарядсемпе тупăсем, самолетсемпе танксем пекех кирлĕ пулса тăракан тырпула нумай тăккаласа пĕтересси патне илсе çитерет. Тырпула ăнăçлăн пухса кĕртес тетпĕр пулсан, ялти мĕнпур коммунистсемпе комсомолецсен çак ĕçе чи активлăн хутшăнмалла, колхозлă ялти мĕнпур ĕççыннисене ĕçре пример кăтартмалла.

Уйрăм районсенче кĕрхи тырăсене вырса пĕтернĕ хыççăнах çуртрисене вырма тытăнмасăр тăраççĕ. Çакнашкал фактсене çийĕнчех пĕтермелле. Çанталăк лайăх мар тăни уйхир ĕçĕсене пĕр чарăнмасăр, куллен ӳссе пыракан хăвăртлăхсемпе туса пыма ыйтать. Кĕрхи тырăсене вырса пĕтернĕ пулсан, мĕнпур жнейкăсемпе çавасене, çурласене çийĕнчех çуртри вырнă çĕре куçармалла. Чи малтан кĕрхи тырăсем акма палăртнă участоксенчи тырпулсене вырмалла, çуртрисем пулса пынă май, пĕтĕмĕшпе пиççе çитессине кĕтсе тăмасăрах, ытти участоксенчи çуртрисене те суйласа илсе вырма тытăнмалла.

Тырпула вырнипе пĕрлех, кĕлте турттарса капана хывас ĕç çине уйрăмах тимлĕн çаврăнса пăхмалла. Уборка темиçе кун пырать пулин те тата нумай колхозсем кĕрхи тырăсене вырса пĕтернĕ пулин те, республикăри колхозсем кĕлте турттарса капана хывас ĕçе халлĕхе тивĕçлипе тытăнман-ха.

Вăрçă обстановкине пăхмасăрах, республикăри колхозсен тырпула чи кĕске сроксенче тата пĕр тăккаламасăр пухса кĕртме пур условисем те пур. Партипе комсомол организацийĕсен, МТС политотделĕсен, вырăнти советсемпе çĕрĕç оргăнĕсен задачи çакă пулса тăрать: тырă вырмалли мĕнпур машинăсемпе, мĕнпур инвентарьпе туллин усă курмалла, колхозсенче ĕçе тĕрĕс организацилемелле, ĕç дисциплинине çирĕплетессишĕн куллен кĕрешсе пымалла. Колхозсен мĕнпур руководителĕсем, колхозниксемпе колхозницăсем, ялхуçалăх ĕçне мобилизациленĕ рабочисемпе служащисем ниçта та мар, тӳрех уборкăра ĕçлеме тивĕçлĕ, тăван çĕршывăмăр—аннемĕр умĕнчи пысăк ответлăха ăнланса илсе ĕçлеме тивĕçлĕ. Çак йывăр вăхăтра ĕçрен пăрăнакансене хирĕç пĕр хĕрхенмесĕр кĕрешмелле. Нимĕç захватчикĕсене çĕнтерес ĕçре колхозниксен ĕçĕ мĕнтери пысăк вырăн йышăнса тăни çинчен агитаторсен колхозниксене тĕрĕс те ĕненмелле ăнлантарса памалла.

Мĕнпур йывăрлăхсене çĕнтерсе пирĕн кăçалхи вăйлă тырпула хăвăрт та пĕр тăккаламасăр пухса кĕртес пулать—çапла тума ыйтать вăрçă вăхăчĕ.

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

Хĕрлĕ Çар авиацийĕн начальство составне Совет Союз Геройĕн званине парасси çинчен

Нимĕç захватчикĕсене хирĕç пыракан кĕрешӳ фронтĕнче Командованин боевой заданийĕсене кăтартуллăн пурнăçа кĕртнĕшĕн тата çак ĕçре хăюлăхпа геройлăх кăтартнăшăн çаксене, **Ленин** орденĕпе **«Золотая Звезда»** медаль парса, **Совет Союз Геройĕн** званине парас:

1. Лейтенанта Владимир Яковлевич **Алкидова**
2. Старши лейтенанта Михаил Дмитриевич **Баранова**
3. Старши лейтенанта Виктор Максимович **Голубева**
4. Старши лейтенанта Александр Васильевич **Мартынова**
5. Майора Анатолий Иванович **Пушкина**
6. Лейтенанта Василий Иванович **Яницкие.**

СССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ М. КАЛИНИН.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль. 1942 çулти августăн 12-мĕш.

Вулав çурчĕ уборка вăхăтĕнче

КАЛИНИНО. Вулав çуртне кĕрсен пурне те пĕлсе тухатăн, теççĕ Мăн Явăшри Ленин ячĕпе тăракан колхоз членĕсем ялти вулав çурчĕ çинчен. Чăнах та, вулав çурчĕн заведующийĕ р. Антонов юлташ хăйĕн ĕçне юратса, вăрçă вăхăтне тивĕçлĕ пек туса пырать.

Вăл колхозниксем ĕçленĕ çĕрте хаçатсенчен Совет Информаци Бюровĕн пĕлтерĕвĕсене вуласа кăтартать, вĕсем ăнланман ыйтусемпе постановленисене ăнлантарса парать.

И. ФЕДИНИН.

Совет Информаци Бюровĕнчен

Августăн 12-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерӳ

Августăн 12-мĕшĕнче пирĕн войскăсем противника хирĕç **Клетская** районĕнче, **Котельниковăран** çурçĕр-хĕвелтухăçнерехри районра, çавăн пекех тата **Черкесск, Майкоп, Краснодар** районĕсенче хаярран çапăçнă.

Фронтăн ытти участокĕсенче паллă улшăнусемех пулман.

* * *

Августăн 11-мĕшĕнче пирĕн авиацин чаçĕсем фронтăн тĕрлĕ участокĕсенче нимĕçсен 20 танкне, войскăсемпе грузсем турттарса пыракан 100 çити автомашинине, горючи тултарнă 5 автоцистернине пĕтерсе тăкнă е сиенленĕ, боеприпассен 4 складне тата горючи усракан пĕр склада сирпĕнтерсе янă, артиллерин 7 батарейине пусарса лартнă, чугунçул çинчи эшелона çĕмĕрсе тăкнă, противникăн пехотине пĕр батальона çити сапаласа янă, пĕр пайне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Клетскаяран кăнтăртарахри районра пирĕн чаçсем нимĕçсен фашистла войскисен атакисене сире-сире пынă. Пĕр участокра пирĕн Н-ски часть контратакăна куçнă. Халăх пурăнакан пĕр пунктшăн пынă çапăçура 200 ытла гитлеровеца вĕлерсе пĕтернĕ. Тепĕр участокра пирĕн боецсем пĕр кун хушшинче нимĕçсен 250 салтакĕпе офицерне, 3 танкне, 2 орудине тата 7 пулеметне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Котельниковăран çурçĕр-хĕвелтухăçнерехри районра вăйлă çапăçусем пынă. Хăшпĕр участоксенче противник оборонăна куçнă. Пирĕн чаçсем чылай çĕрте ăнăçлă атакăсем туса ирттернĕ, тăшмана хавшатса пырса, ăна çирĕпленсе ларма паман. Совет танкисчĕсем авиаципе артиллери пулăшса пынипе, гитлеровецсен колоннине атакăланă, противника чĕрĕ вăйпа техника тĕлĕшпе пысăк сиен кӳнĕ. 700 ытла гитлеровеца вĕлерсе пĕтернĕ. Тăшманăн 16 танкне, 3 бронемашинине, 14 орудине тата пулеметсен 17 точкине пĕтерсе тăкнă.

* * *

Краснодар районĕнче пирĕн чаçсем противникăн йышлăрах вăйĕсене хирĕç оборонăллă хĕрӳллĕ çапăçусем туса пынă. Юханшыв патĕнчи пĕр рубежра шыв урлă каçмалли вырăнсемшĕн кунĕн-çĕрĕн çапăçу пынă. Пирĕн авиаци вĕçсе пырса штурмланипе тата пирĕн артиллерипе минометсенчен пенипе нимĕçсен шыв урлă каçмалли виçĕ вырăнне пĕтерсе тăкнă. Пĕр кун хушшинче нимĕçсен 10 танкне, 20 автомашинине персе çĕмĕрнĕ тата çунтарса янă, нимĕçсен пехотине 3 ротăна çити пĕтерсе тăкнă. Пирĕн инçете перекен артиллери тата бомбардировщиксем противникăн фронт патнелле килсе тăракан резервĕсене питĕ нумай пĕтерсе тăкнă.

Черкесск районĕнче пирĕн чаçсем çĕнĕ рубежсем патне чакнă.

* * *

Воронежран кăнтăртарахри вырăнта, Донăн хĕвеланăç енче, совет боецĕсем икĕ кун хушшинче нимĕçсен 500 çити салтакĕпе офицерне пĕтерсе тăкнă. Темиçе оруди тата винтовкăсемпе автоматсем нумай тытса илнĕ. Тыткăна илнисем пур. Юнашар участокра халăх пурăнакан пунктăн урамĕсенче çапăçусем пынă. Пирĕн летчиксем, хамăрăн çĕр çинчи войскăсене пулăшса пырса, нимĕçсен темиçе танкне, 37 автомашинине, 2 бензоцистернине пĕтерсе тăкнă тата артиллерин икĕ батарейине пусарса лартнă. Сывлăшри çапăçусенче противникăн икĕ самолетне персе антарнă.

* * *

Карели фронтĕнче Гальченко, Белоусов, Краснолуцкий тата Фомин юлташсем командир пулса тăракан чаçсенчи летчиксем финсен аэродромĕ çине ăнăçлăн вĕçсе кайса тапăннă. Противникăн зенитнăй артиллерийĕ пенĕ тĕлтен ăнăçлăн каçса, пирĕн самолетсем хăйсен тĕллевĕ патне вĕçсе çитнĕ те финсен аэродромĕ çине бомбăсем питĕ нумай пăрахнă. Самолетсем çинчен фото ӳкерсе илнĕ тăрăх çакна палăртнă: çав тапăнура пирĕн летчиксем тăшманăн çĕр çинче ларакан 10 бомбардировщикĕпе истребительне тата аэродромри ремонтно-механически мастерскойĕсене пĕтерсе тăкнă.

* * *

Орел облаçĕн нимĕçсем оккупациленĕ районĕсенчен пĕринче кĕрешекен Ж. юлташăн партизанла отрячĕ противникăн чугунçул тăрăх чĕрĕ вăй, техника тата боеприпассем турттарса пыракан 4 эшелонне ӳпĕнтерсе янă. Гитлеровецсем, ним тума пĕлмесĕр, хăйсен чугунçул çинчи хуралĕнчи 15 офицерне арестленĕ, салтакĕсене фронта ăсатнă.

Нимĕçсен тылри районĕн начальникĕ кăларнă приказ тăрăх чугунçулсем çинчи хурала вăйлатнă. Ятарласа уйăрнă командăсем чугунçул линии тăрăх икĕ енĕпе те вăрмана 500-шер метр сарлакĕш касса тухаççĕ. Анчах çапах та аварисемпе катастрофăсем чакмаççĕ. Поездсем малтанхи пекех ӳпĕне-ӳпĕне каяççĕ.

* * *

Аяларахра нимĕçсен салтакĕ Герберт хăйĕн ашшĕ-амăшĕ патне çырса янă çырури хăшпĕр вырăнсене илсе пичетлетпĕр: «Пирĕн кунта иккĕмĕш хут хĕлле çапăçма тивесси çинчен çавтери хăраса шухăшлатпăр. Командовани пире вăрмансене тасатса тухса йышăнса илме тыла ячĕ. Халăх партизансемпе пĕр майлă. Партизансене хупăрласа илес тесе тăрăшатпăр, анчах та вĕсем кашнинчех пирĕн ункăран вĕçерĕнсе тухаççĕ. Тылра партизансем ялсене çеç мар, тата темиçе хулана та хăйсен аллинче тытса тăраççĕ. Эпир çывхарса пынине курсанах ялсенчи çынсем вăрмана тарса пытанаççĕ... Эпир тивертсе яракан ялсем кунĕн-çĕрĕн çунаççĕ. Çимелли япаласене кунта тахçанах пĕтернĕ.

* * *

Финсен çарĕнче салтаксем офицерсем хушнисене итлеме килĕшменни уççăнах палăрма пуçланă. Çапăçăва кĕме пачах та килĕшмен салтаксене юлашки эрнере Пори станци урлă Финляндири çар тĕрмисене 600 çынна ытла ăсатнă.

Августăн 13-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерӳ

Августăн 13-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн войскăсем противника хирĕç **Клетская** районĕнче, **Котельниковăран** çурçĕр-хĕвелтухăçнерех вырăнта, çавăн пекех тата **Черкесск, Майкоп** тата **Краснодар** районĕсенче çапăçнă.

Фронтăн ытти участокĕсенче нимĕнле улшăнусем те пулман.

* * *

Клетскаяран кăнтăрарах районра вăйлă çапăçусем пулса пынă. Хавшаса çитнĕ чаçĕсене улăштарма противник çапăçăва çĕнĕ резервсем кĕртсе ярать. Н-ски стрелковăй часть, противникăн 6 атакине сирсе ярса, ăна пысăк çухатусем тӳстернĕ. Çав çапăçура нимĕçсен 18 танкне, 3 бронемашинине, 23 автомашинине, 15 орудине тата 900 гитлеровеца ытла пĕтерсе тăкнă. Тепĕр участокра противник кăштах малалла кайма пултарнă.

* * *

Котельниковăран çурçĕр-хĕвелтухăçнерехри районра пирĕн чаçсем противника атакăланă та хăйсен позицийĕсене лайăхлатнă. Халăх пурăнакан пĕр пункт патĕнче вăйлă çапăçу пуçланса кайнă. Çав пункт темиçе хут та алăран алла куçнă. Туллимар даннăйсем тăрăх, пирĕн чаçсем пĕр талăк хушшинче противникăн 11 танкне тата салтакĕсемпе офицерĕсене 500 çынна çити пĕтерсе тăкнă.

* * *

Краснодар районĕнче пирĕн войскăсем противникăн наступлени туса пыракан войскисене хирĕç оборонăллă йывăр çапăçусем тунă. Пирĕн пĕр чаçăн оборонин фрончĕ умĕнче нимĕçсен 5 танкне, 21 автомашинине пĕтерсе тăкнă тата 400 гитлеровеца ытла вĕлерсе пĕтернĕ. Артиллерирен персе тата авиаци бомбăсем пăрахнипе нимĕçсем пĕр юханшыв урлă хывнă икĕ кĕпере çĕмĕрсе тăкнă. Противник пысăк çухатусем тӳснĕ.

Майкоппа Черкесск районĕсенче пирĕн чаçсем противникăн танкĕсемпе мотопехотине хирĕç хĕрӳллĕ çапăçусем туса пынă.

* * *

Воронежран кăнтăрарах вырăнта пирĕн войскăсем, противник хирĕç тăнине сире-сире пăрахса, тăшман войскисене малалла хĕссе пыраççĕ. Халăх пурăнакан К. пунктне нимĕç войскисенчен тасатнă. Чул çуртсенче пулнă гитлеровецсене пĕтĕмĕшпех пĕтерсе тăкнă. Тепĕр участокра противникăн хаяр контратакисене сирсе янă. 400 гитлеровеца вĕлерсе пĕтернĕ. Нимĕçсен 170 салтакĕпе офицерне тыткăна илнĕ.

* * *

Çурçĕр-хĕвеланăç фронтĕнче активлă çапăçусем пулса пынă. Участоксенчен пĕринче пирĕн чаçсем халăх пурăнакан пункта йышăнса илнĕ. Нимĕçсем çак пункта каллех туртса илме хăтланнă, талăк хушшинче 15 контратака тунă. Противникăн çак атакисене пурне те, ăна пысăк çухатусем кӳрсе, сирсе пăрахнă. Пирĕн боецсем хăйсем йышăннă позицисене çирĕппĕн тытса тăраççĕ. Туллимар даннăйсем тăрăх, нимĕçсен, вилнисене кăна шутласан та, 300 яхăн салтакпа офицер пĕтнĕ. Тепĕр участокра Свиридов юлташ командир пулса тăракан чаçри боецсем икĕ кун хушши çапăçса 550 гитлеровеца вĕлерсе пĕтернĕ. 21 пулемет, 4 оруди, 9 миномет, 1.000 снаряд, 3.000 мина, 6 противотанковăй пăшал тата винтовкăсем нумай тытса илнĕ.

* * *

Карелсемпе финсен партизанла отрячĕ, Г. юлташ ертсе пыраканскер, çĕрле противникăн гарнизонĕ çине пырса тапăннă. Тăшмана кĕтмен çĕртен пырса çапса, партизансем 150 гитлеровеца вĕлернĕ тата 45 винтовка, 6 автомат тата радиостанци тытса илнĕ.

* * *

Г. юлташ командир пулса ертсе пыракан партизансен отрячĕ, Калинин облаçĕнчи районсенчен пĕринче кĕрешекенскер, противникăн продовольстви турттаракан эшелонне ӳпĕнтерсе янă. Çав отряд партизанĕсемех оккупантсен бронепоездне çĕмĕрнĕ. Паровоза тата икĕ бронеплощадкăна пĕтерсе тăкнă.

* * *

Нимĕçсен салтакĕ Иозеф çумĕнче вăл йăмăкĕ Сабина патне ярса ĕлкĕреймен çырăва тупнă. Çырура çапла каланă: «Паян эпир хамăра валли 20 чăх тата 10 ĕне лектертĕмĕр. Эпир ялсенчен пĕтĕм халăха—çитĕннисене те, ачасене те хăваласа каятпăр. Нимĕнле йăлăнса ыйтни те пулăшмасть. Эпир хаяр пулма пĕлетпĕр. Кам та пулсан пырасшăн мар тăрсан,—ăна тĕп тăваççĕ. Нумаях та пулмасть пĕр ялта пурăнакансен ушкăнĕ турткаланса тăчĕ, ялтан каясшăн мар пулчĕ. Эпир урса кайрăмăр та вĕсене пурне те персе вĕлертĕмĕр. Кун хыççăн вара питех те хăрушă ĕç пулса иртрĕ. Вырăссен темиçе хĕрарăмĕ икĕ нимĕç салтакне сенĕкпе чиксе вĕлерчĕç... Кунта пире курăймаççĕ. Тăван çĕршыври çынсем нихăшĕ те вырăссем пирĕн çине мĕнле хаяррăн тарăхнине ăнланма пултараймаççĕ».

* * *

Нимĕçсен фашистла çынçиенĕсем Белорусси ССР-нчи Кировски районри Костричи, Козуличи, Кострицкая Слободка, Ореховка, Осиновка, Подстружье тата Борки ялĕсене пĕтĕмĕшпех çунтарса янă. Çав ялсенче гитлерла палачсем советăн 600 ытла çыннине асаплантарса тата персе вĕлернĕ.

* * *

Тюссефальденри (Норвегия) пысăк электростанцире Норвеги патриочĕсем хăватлă турбинăна стройран кăларнă. Хардангер—Фиорд районĕнче Норск Алюминиум заводĕнче пушар пулнипе икĕ цех çунса кайнă.

Колхозниксемпе комбайнер юлташсем! Тырпулсене пухса кĕнĕ çĕрте ĕç нормисене ытлашшипех тултарса ĕçлĕр!

КĔЛТЕ ТУРТТАРМА, АВĂН ÇАПМА ТЫТĂНМАН

ЙĔПРЕÇ. (**Телефонпа**). Кăçал чылай колхозсем иртнĕ çулти йăлăшсене шута илсе, вырнă тырра çийĕнчех çыхса çĕмеле хываççĕ. Çавăн пекех вырса пынă май, авăн çапаççĕ, çĕнĕ тырра государствăна леçеççĕ. Паянхи куна районри 11 колхоз ыраш вырса пĕтерсе, кĕлтисене çĕмеле хывнă.

«Правда», «Заря», «Коминтерн», «10 лет Октября», «Красная Нива» тата ытти колхозсем те кĕлтесене итем çине турттарса, авăн çапма пуçланă. Вĕсем кашниех государствăна вуншар центнер тырă панă.

Чăрăшкассинчи «10 лет Октября» колхоз иртнĕ çулта вырнă тырра çийĕнчех çыхса пыман пирки çăмăрпа нумай тырпул пĕтнĕ. Кăçал колхоз çав йăнăша çирĕппĕн шута илчĕ. Кунта вырнă пек тырра çийĕнчех çыхса, çĕмеле хывса пыраççĕ. Уйра колхозăн 4 жнейка, пĕр лобогрейка ĕçлет. Вĕсем куннe 25—30 гектар выраççĕ. Колхозниксем вĕсем хыççăн кĕлте çыхса ĕлкĕрсех пыраççĕ. Августăн 10-мĕшĕнче колхоз авăн çапма тытăнчĕ. Икĕ кун хушшинче вăл государствăна 20 центнер ытла тырă леçсе пачĕ.

«Красная Нива» колхоз та ĕçе аван йĕркеленĕ. Ыраш пусси итем çывăхĕнче пулнипе усă курса, колхозниксем тырра турттарса тӳрех çапаççĕ.

Анчах районра кĕлте турттарса капана хывас тата авăн çапас ĕçсене япăх туса пыракан колхозсем чылай-ха. «Строитель» колхозра (председателĕ Федоров) машинăсем хыççăн кĕлте çыхса ĕлкĕрсе пыраймаççĕ. Кĕлте турттарса капана хывас ĕçе пачах та организацилемен. Çавăн пекех Крупская ячĕпе тăракан, «Комбайн» тата ытти колхозсем те кĕлте турттарса капана хывас ĕçе пачах та пуçăнман.

Д. МИХАЙЛОВ.

Ишлей МТС-ĕ колхозсене начар пулăшать

Августăн 10-мĕш тĕлне районри колхозсем пурĕ 7.840 гектар ыраш вырнă. Ку вăл кĕрхи тырăсен пĕтĕм лаптăкĕн 61 процентĕ пулать. Район тырăсене пухса кĕртес ĕçе каярах юлса тухрĕ. Çак çитменлĕхе çийĕнчех пĕтерме районăн пур условисем те пулнă, анчах та паянхи куна та нумай колхозсенче уборкăри ĕçсен хăвăртлăхĕ çӳллĕ пусăма çĕкленмен-ха. Районра 12 колхоз çеç ыраш вырса пĕтернĕ.

Районри машинно-тракторнăй станци тырпулсене пухса кĕртес ĕçре кăçал начар ĕçлет. МТС-ăн 13 комбайн. Вĕсемпе кăçал пурĕ 1.040 гектар çинчи тырăсене пухса илмелле. Анчах та нумай комбайнсем халĕ те тивĕçлипе ĕçлеме тытăнман. Августăн 10-мĕш тĕлне комбайнсемпе мĕнпурĕ те 155 гектар çеç вырнă. Уборкăна тухнăранпа 9-мĕшпе 3-мĕш бригадăсем кăна комбайнсемпе йĕркеллĕн ĕçлесе кунсерен 7-шер гектар вырса пыма пултарчĕç. Ку комбайнсемпе паянхи куна 72 гектар ыраш вырнă. Ытти комбайнсем йĕркеллĕн ĕçлеймен-ха.

— Комбайнсем начар ĕçлени комбайнерсенчен килет, вĕсен ĕçре опыт сахалтарах пирки комбайнсемпе туллин усă курма пултараймастпăр,—тесе калаççĕ МТС руководителĕсем. Паллах, ку вăл ĕç япăх пынин сăлтавĕ мар.

Комбайнерсенчен 7-шĕ иртнĕ çул комбайнерсен помощникĕсем пулса ĕçленĕ. 3-шĕ трактористсем тата 3-шĕ темиçе çул хушши ĕçленĕ опытлă комбайнерсем. Вĕсене техника тĕлĕшĕнчен пулăшу вăхăтра парса тăрсан, комбайнерсем çитĕнӳсем туса ĕçлеме пултармалла. Çакă çук та ĕнтĕ Ишлей МТС-ĕнче. Бригадăсенче агитациллĕ ĕçе пачах туса пымаççĕ.

Комбайнсем малтанхи кунах ванаванa кайнă. Çапла, нумай комбайнсене çĕнĕрен юсамалла пулнă. Ăçта пулнă-ха МТС руководителĕсен сисĕмлĕхĕ? Мĕншĕн кунта комбайнсене çирĕп юсаман? МТС работникĕсем, комбайнерсемпе трактористсем хушшинче ĕç дисциплинине те çирĕплетмелле.

Вăрçă вăхăчĕ кашни ĕççыннине, руководителе ĕç фронтĕнче темиçе хут ответлăрах пулса ĕçлеме хушать. Çакна Ишлей МТС-ĕн руководителĕсем пĕтĕмпех туйса илмен-ха.

Комсомолецсем—уборкăри стахановецсем

Кушкăри «Ким» колхозри (Елчĕк р.) Комсомолецсем уборкăн малтанхи кунĕнчен пуçласах пĕтĕм вăя хурса ĕçлеççĕ. Ĕç планĕ тăрăх 217 гектар çинчи ыраша 6 кун хушшинче вырса пĕтермелле пулнă пулсан, «Ким» колхоз членĕсем 5 кун çурăра вырса пĕтерчĕç.

Уборкăн малтанхи кунĕнчен тытăнсах бригадăсемпе звеносем тата колхозниксем хушшинче социализмлă ăмăрту анлăн сарăлчĕ.

Ĕçре пример кăтартса пыракансем комсомолецсем пулчĕç. Комсомолецсенчен 4 çын машинистсем пулса ĕçлереç. Вĕсем кулленхи нормăна яланах тултарса пычĕç. Сăмахран, Н. Шамбин, М. Дергунов, С. Галашев кулленех нормăна 140—150 процент тултарнă. Алăпа выракансем те нормăна ытлашшипех тултарса пычĕç. Васса Пыркина, Мария Воробьева, Нина Бакина нормăна 120—140 процент тултарса ĕçлерĕç. Уборкăра комсомолецсем агитаторсем пулса ĕçлеççĕ, хаçатсем кăлараççĕ.

Н. БАБОЧКИН.

ФРОНТОВИК—АГИТАТОР

ТĂВАЙ. Кармалти «Комсомолец» колхоз членĕ Осип Совин, отечественнăй вăрçăра аманса таврăннă хыççăн, колхоз счетовочĕ пулса ĕçлеме тытăнчĕ. Çак çамрăкăн чĕри çĕршыва мĕнпур майпа пулăшас шухăш-кăмăлпа çунать.

Вăл вăрçăра пирĕн мухтавлă Хĕрлĕ Çарăн боецĕсем мĕнле паттăррăн çапăçни çинчен пушă вăхăтсенче колхозниксем хушшинче калаçусем туса ирттерет, çапăçури уйрăм эпизодсене каласа парать, тылра пĕтĕм вăя хурса ĕçлеме чĕнет.

Г. КАЧИМОВ.

РАЙОН КĔРАКИНЕ ХАТĔРЛЕНМЕН

ЧКАЛОВСКОЕ. (**Хамăр корр.**). Августăн 12-мĕш тĕлне районри 30 колхозран кĕртырррисене акма 12 колхоз çеç тытăннă. Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕ 1942 çулти кĕракине хатĕрленес тĕлĕшпе кăтартса панă мероприятисене вăхăтра пурнăçа кĕртсе пыманнине пула, районри чылай колхозсем кĕракине начар хатĕрленсе тухрĕç. Район августăн 10-мĕш тĕлне 137 сеялкăран 97-шне çеç юсанă, пĕтĕмĕшпе илсен, район çĕртме тăвас плана тултарман. План тăрăх кĕрхи тырăсене акма 8.745 гектар çĕр сухаласа хатĕрлемелле пулнă, анчах августăн 5-мĕш тĕлне 6.132 гектар çеç сухаланă. Тĕслĕхрен, «Путь Ленина» колхозăн çĕртме сухине 580 гектар сухаламалла пулнă, вăл пурĕ те 395 гектар çеç сухаланă. Çавăн пекех «Правда», «Ударник», «Звезда» колхозсем те кĕртырррисем акмалли çĕре хатĕрлесе çитермен. Районри машинно-тракторнăй станцийĕн кăçал кĕрхи тырăсене акма 715 гектар çĕр сухаламалла пулсан, вăл ăна халĕ начар пурнăçласа пырать-ха.

П. НИКОЛАЕВ.

Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăрту

Кинсбургскипе Семенов юлташсен цехĕсем—ăмăртура çĕнтерекенсем

Оборонăн Государственнăй Комитечĕн куçса çÿрекен Хĕрлĕ ялавне илнĕ заводра çак кунсенче цехсен июль уйăхĕнчи ăмăртăвĕн итогĕсене пĕтĕçтерсе тухнă. Заводри жюри июльри программăна коллективпа пур продукци тăрăх та иртерсе тултарнине палăртнă. Чылай цехсем июнь уйăхĕнчи тикĕсрех те тухăçлăрах ĕçленĕ. Тĕп цехсенчен Кинсбургский юлташ начальникпулса, Малыхин юлташ парторг пулса ертсе пыракан цех мала тухнă. Çак цех уйăхри плана 22 кун хушшинчех тултарнă, юлашки кунсенче планран ирттерсе продукци панă. Июль уйăхĕнче рабочисенчен кашнинех нормăна 1,5 хут иртерсе ĕçленĕ, стахановецсен речĕ ÿснĕ. М. Бондарь, Антипенко стахановкăсем нормăна кашни кун 260—280 процент тултарнă. Мастерсем Витков, Малыхин юлташсем хăйсен участокĕсенчи ĕçе лайăх организациленĕ ертсе пынă. Цех таçăкри графика тĕрĕс пурнăçланин примерне кăтартнă.

Çавăнпа заводри жюри цехсен куçса çÿрекен Хĕрлĕ ялавне Троицкий юлташăн цехĕнчен илсе, Кинсбургский юлташăн цехне пама йышăннă.

Подсобнăй ĕçсене тăвакан цехсенчен Семенов юлташ начальник пулса, Васильенко юлташ парторг пулса ертсе пыракан цех мала тухнă. Нумай хушма кун хуçăк юлса пыракан цех шутланнă. Июль уйăхĕнче пух коллективĕ хăйĕн ĕçне тĕпренех урăхласа çĕнетнĕ те плана срокчен тата ытлашшипех тултарнă, подсобнăй ĕçсене кăтартулă пурнăçланă.

Çавăнпа заводри жюри подсобнăй цехсен куçса çÿрекен Хĕрлĕ ялавне Скиндер юлташăн цехĕнчен илсе, Семенов юлташăн цехне пама йышăннă.

Çакна та палăртас пулать: Хĕрлĕ ялава илнĕ ăрăн вĕçертнĕ Троицкие Скиндер юлташсен цехĕсем те июль уйăхĕнче начар мар ĕçленĕ, плана вĕçем срокчен тата ытлашшипех тултарнă. Анчах вĕсем пĕр вырăнта тăмасть, куçса çÿрет, вăл хăйне тăрăх лайăхрах ĕçлекенсене аллине лекет. Задача—çак уйăхра татах та лайăхрах ĕçлемелле, çак ялава тепĕр хут илме тивĕçлĕ пулмалла.

Стахановецсем—рационализаторсем

ÇĔМĔРЛЕ. (Хамăр корр.). Комбинатри стахановецсем паха рессуплатсем кăтартса ĕçлени вĕсем технологи процесне лайăх вĕренсе çитнинчен тата ĕç кунĕне туллин усă куринчен кăна мар, хăйсен ĕçне урăхлатса çĕнетес тĕлĕшпе рационализатора сĕнÿсем парса, вĕсемпе усă куринчен те килет. Юлашки вăхăтра вĕсем технологи процесне урăхлатса çĕнетес тĕлĕшпе палă ушшинçсем турĕç. Вĕсем панă рационализаторла сĕнÿсемпе усă курса хăвăртрах пишнер тенкĕ перекетлеме май парасçĕ.

Назаров юлташ ертсе пыракан цехра кĕске вăхăт хушшинчех 44 сĕнÿ панă, вĕсем султалăкра 76.900 тенкĕ перекет кÿресçĕ.

Стахановец-двухсотник Г. Уточкин юлташ нумаях пулмасть икĕ сĕнÿ панă. Вăл сĕнÿсем ĕç тухăçлăхне ÿстерес тата продукция хăйне ларакан хакне йÿнетес тĕлĕшпе питех те паллă вырăн йышăнасçĕ. Халĕ чылай рабочисем, унăн методĕпе ĕçлесе, ĕç тухăçлăхне икĕ хут ÿстерчĕç.

Стахановец-сборщик Прокопьев юлташ панă сĕнÿ султалăк хушшинче 50 пин тенкĕ перекетлесе хăвармалла. Халĕ вăхăтра унăн сĕнĕвĕ тăрăх ĕçлесе пур рабочисене те кусарнă, вĕсем пурте хăйсен куллен нормисене 180—250 процент тултарса ĕçлесçĕ.

Столярсем-стахановецсем Маркелов, Лаврентьев, клейщик Угрычев, смена мастерĕ Рыбакин юлташсем те производствăри хĕсĕк вырăнсене пĕтерес, ĕç тухăçне ÿстерес тĕлĕшпе питех те нумай сĕнÿсем паçĕç. Вĕсен сĕнĕвĕсем темиçе пин тенкĕ перекетлесе хăварма май парасçĕ.

Х. ЛИСИН.

РАЙОНРИ ХАÇАТСЕНЧЕН

533 ача валли площадка

Ежĕн Нăрваçри «Красная Чувашия» колхоз уйăр тырпулсене вăхăтра тата пĕр тăкаксăр пухса кĕртес шутпа 6 ыйăнта ачасен площадкине организацилерĕ. Площадкăра пурĕ 533 ача. Вĕсем валли колхоз 50 центнер тулă, ашкакай, пыл, çырла тата ытти çимĕçсем те панă.

(ТАВАЙ—«Большевикла колхозçăн»).

Кашни сменăра—икшер норма

Алманчăри Ленин ячĕпе тăракан колхозра 60 çулти колхозник Николай Попов жнейкăпа вырать. Вăл уборкăн малтанхи кунĕсенчех кулленех ĕç нормине иртерсе тултарать. Халĕ Попов юлташ кашни сменине кашни кунах 7—8-шар гектар вырса, ĕç нормине икшер хут иртерсе тултарать. Унăн ĕçĕ яланах таса та тирпейлĕ. Жнейка ĕçре пĕрре те чарăнса ларман.

(ЧКАЛОВСКОЕ—«Коммунизм байрагĕ»).

Тимĕрçĕ—стахановец

Кивĕ Эйпеçри «Красный партизан» колхозăн тимĕрçи Казаков хăйĕн ĕçне юратса, чĕререн туса пырать. Вăл колхозăн жнейкисене пиллĕкшерĕ те уборкăна тухиччен нумай малтан юсаса пĕтернĕ, колхозникисен валли çурласем шăлласа, çавасене туптаса тата хăйрасах панă. Кунсăр пуçне вăл колхоз ĕçне машиновед пулса ĕçлеме Авксентьев Алексей, Катмаков Василий тата Кафтаров Виталий çамрăксене вĕрентсе кăларнă. Вĕсем халь жнейкăсене ĕçлесе нормăна тултарса пырасçĕ.

Казаков юлташ халь молотилкăсене юсаса пĕтерет тата ытти машинăсене ремонтлать.

(ЕЛЧĔК—«Колхозник ялавĕ»).

„Русские люди" пьесăна лартма хатĕрленесçĕ

ÇĔМĔРЛЕ. (Хамăр корр.). Комбинатри драмкружок коллективĕ Сталинла преми лауреачĕ К. Симонов çырнă «Русские люди» пьесăна лартса хатĕрленет. Халĕ репетицисем пулса пырасçĕ.

Отряд командирĕн Сафоновăн ролĕнче—комбинатри электрик Храмов юлташ, Валя ролĕнче—ФЗО шкулĕн секретарĕ Семенова юлташ штаб начальникĕ вырăнĕнче—старши мастер Милорадович юлташ, Марфа Петровна ролĕнче—драмкружок режиссерĕ З. Рубцова выляççĕ.

Спектакле августăн 15-мĕшĕ хыççăн лартма шутласçĕ.

Чăвашсен ялхуçалăх институчĕ вăрçă кунĕсенче

Иртнĕ вĕренÿ çулĕнче Чăвашсен ялхуçалăх институчĕнчен 36 агроном тата 50 зоотехник вĕренсе тухрĕç. Вĕсем пилăкĕшĕ Чăваш республикинче ĕçлеме юлчĕç. Институт вĕрентсе кăларнă специалистсем ялхуçалăхĕнче тăрăшса ĕçлесçĕ. Кунсăр пуçне, кăçал уборкăра трактористсем, комбайнерсем, агрономсем, трактор бригадисен бригадирĕсем пулса ĕçлеме институт студенчĕсемпе преподавателĕсем кайрĕç. Çапла вара, институт хăйĕн вăйĕпе колхоз производствине пулăшать.

Хими кафедрин доценчĕ Н. А. Сычев тĕпчесе питĕ усăллă витаминсене палăртнă. Çав витаминсем Хĕрлĕ Çарăн аманнă боецĕсене сипленĕ çĕрте пысăк усă парасçĕ. Усен-тăрансен кафедрин доценчĕ К. И. Наумов выльăхсене тăрантармалли çĕнĕ апат тăвас ĕçе тытăннă, çав культурăна лартни выльăхсем валли апат нумайрах туса хатĕрлеме май парать. Профессор Н. М. Замятин ертсе пынипе институт работникĕсен коллективĕ ялхуçалăхĕнчи выльăхсен продуктивноçне ÿстерне çĕрте пысăк усă паракан метода пурнăçа кĕртес тĕлĕшпе ĕçлет. Доцент Н. С. Тураев пурçăн хурчĕ ĕрчетес тĕлĕшпе тĕпчевсем тăвать.

Чăваш республикинче сахăр кăшманĕ лартса тума, кок-сагыза, кĕрпе тумалли культурăсен акса тума тытăнас енĕпе профессор Л. А. Пельцих ĕçлет.

Ялхуçалăх институчĕн агрономи факультечĕ тата вĕрентекенсем ÿсентăран тĕпчесе пĕлме тăрăшаççĕ. Доцент А. В. Плетнев çамрăк выльăхсене пăхса ÿстерес тата вĕсене чир-чĕрсенчен сыхласа тăрас тĕлĕшпе ĕçлет. Доцент В. А. Соловьев сурăх сĕтĕнчен чăкăт (брынза) тăвас ыйтупа тĕпчевлĕ ĕçсем туса ирттерет. Наукăсем Белоруссири Академин член-корреспонденчĕ профессор Н. В. Найденов выльăх-чĕрлĕхсене тăрантарас тата пăрусене хăвăртрах ÿстерес меслетсене тĕпчесе пĕлме тăрăшать.

Хальхи вăхăтра институт çĕнĕ вĕренÿ çулне хатĕрленет. Институт çуртне йĕркелеççĕ, студентсемпе преподавательсем валли столовăй, вĕренекенсем валли общежити хатĕрлеççĕ. Столовăй валли апат-çимĕççем учебнăй хуçалăхран тата институтăн опытнăй участокĕнчен пухса кĕртеççĕ. Института кĕме панă заявленисем кунран-кунах нумайланса пыраççĕ. Института вĕренме кĕме хатĕрленекенсем валли подготовительнăй курс уçнă.

ГЕРАСИМОВИЧ.

Ялхуçалăх институчĕн директор заместителĕ.

ОТЕЧЕСТВЕННĂЙ АСЛĂ ВĂРÇĂ ФРОНЧĔСЕНЧЕ

Унерчĕн çинче: Совет Союзĕн икĕ хут Геройĕ подполковник Г. Ф. Сафонов, вăл сывлăшри çапăçусенче фашистсен 20 самолетне персе антарнă. Сафонов юлташа—Англи правительстви орденпа наградăланă тăватă совет летчикĕсенчен пĕри.

Воронеж районĕнчи вăрçă

ДЕЙСТВУЮЩИ АРМИ, августăн 12-мĕш. **(ТАСС спецкорĕ).** Воронеж районĕнчи çапăçусем лăпланма пĕлмесçĕ. Пирĕн чаçсем пĕр-пĕр çапнине фашистсем татах та темиçе рубежран пăрахса кайнă. Çапăçусен хыçĕнче боецсем трофейсем тытса илнĕ, нимĕç салтакĕсене тыткăна илнĕ тата малалла усă пынă.

Воронежран çурçĕр-хĕвеланăç енче совет чаçĕсем нимĕçсен контратакине сирсе пăрахнă, фашистсене пысăк çухатусем тÿстерсе, малтанхи позицисем патнех хăваласа янă. Тепĕр участокра боецсем, халăх пурăнакан пункта йышăнса илсе, нимĕçсене малалла хĕссе пыраççĕ.

Пирĕн авиаци ăнăçлăн кĕрешет. Н-ски авиаподразделенири летчиксем сывлăшри çапăçусенче противникăнне 2 самолет персе антарнă, тăшманăн темиçе танкне, 40 яхăн автомашинине пĕтерсе тăкнă, артиллерин 2 батарейине тата 2 зенитнăй орудине пусарса лартнă.

Тăшмана хирĕç çапăçнă çĕрте совет воинĕсен пĕлÿлĕхĕпе паттăрлăхĕ ÿссех пырать. Противник танксемпе атака тунă чухне пирĕн боецсен ушкăнĕ йывăр лару-тăрăва лекнĕ пулнă, вĕсем хирĕç тăрасси вăйсăрланнă. Терентьев лейтенант, алăра гранатăсем тытса, тăшман танкĕсене хирĕç чи малтан ывтăннă, хăйĕн хăюлăхĕпе вăл мĕнпур боецсене ертсе кайнă. Нимĕçсен машинисем çине гранатăсемпе çунакан шĕвек тултарнă бутылкăсем вăркăннă. Çавăнтах нимĕçсен пĕр танкĕ çунма пуçланă, ыттисем каялла çавăрăннă.

Зайцев красноармеец, разведка тăвакан группăпа пĕрле Донăн хĕвеланăç çыранне каçнă та, фашистсен пулеметчикĕ патне систермесĕр шăвăнса пырса, гитлеровеца прикладпа çапса вĕлернĕ. Пулемета тытса илсе, Зайцев юлташ фашистсен юнашарти пулемет расчечĕ çине пеме тытăннă. Тĕл персе тивертсе, вăл тăшман пулемечĕн расчетне пĕтерсе тăкнă, çапла вара хамăрăн подразделение шыв урлă каçма çăмăллатса панă.

Г. КРЫЛОВ.

КЛЕТСКАЯ РАЙОНĔНЧЕ

ДЕЙСТВУЮЩИ АРМИ, августăн 11-мĕш. **(ТАСС спецкорĕ).** Пирĕн войскăсем противникăн танкĕсемпе мотопехотине хирĕç вăйлăн çапăçаççĕ. Дон патне пымалли вырăнсене хÿтĕлесе тăракан Н-ски стрелковăй чаçа нимĕçсем хăвăрт пырса çапса, хĕстерсе лартма шутланă. Анчах нимĕç командованийĕн ĕçĕ йăнăш пулнă. Пĕр кун хушшинче нимĕçсен нумай салтакĕсемпе офицерĕсем вилсе тата аманса пĕтнĕ. Фашистсем танксемпе артиллери тата авиаци тĕлĕшпе питĕ пысăк çухатусем тÿснĕ.

Колобовников юлташ военком пулса тăракан часть оборонăри çирĕплĕхĕн тĕслĕхне кăтартать. Противник çав чаçа хирĕç темиçе хутчен те 20-шер танка çити тата пехотăн пĕр полкне ытла çапăçăва кĕрте-кĕрте янă. Боецсем, нимĕçсене тытса чарнă кăна мар, хăйсен позицийĕсене те лайăхлатнă, тăшманăн салтакĕсемпе офицерĕсене 150 çынна тыткăна илнĕ.

Клетскаяран кăнтăр енчи рубежа тытса тăракан стрелковăй чаçăн участокĕнче вăйлă çапăçу пуçланса кайнă. Часть тăшмана хирĕç контратака тума тата нимĕçсенчен çĕнĕ рубеж туртса илсе çавăнта çирĕпленсе лармa задани илнĕ. Противник хаяррăн хирĕç тăнă, анчах пирĕн боецсене нимĕн те чарса тăма пултарайман. Штык вĕççĕн тăрса атакăласа, боецсем тăшмана сирсе пăрахнă. Высотана пирĕннисем йышăнса илнĕ те хăйсен аллинче çирĕппĕн тытса тăраççĕ. Пĕр кун хушшинчи çапăçусенче çав часть 260 фашиста яхăн пĕтерсе тăкнă.

Çак участокри çапăçусем малалла пулса пыраççĕ.

З. ЛИПАВСКИЙ.

Ют çĕршывсенче

Иккĕмĕш фронт уçассишĕн США-ра пулса иртнĕ массăллă митингсем

НЬЮ-ЙОРК, августăн 12-мĕш. (ТАСС). Лос-Анжелосра иккĕмĕш фронт ыйтăвĕпе нумай пин çынлă митинг пулса иртнĕ. Моряксен профсоюзĕн председателĕ Каррэн митингра çапла каланă: хальхи вăхăтри лару-тăру иккĕмĕш фронт тăвас тĕлĕшпе васкавлăн ĕçлеме ыйтать, тенĕ. Кăçалах çĕнтерÿ тăвас тесен, Гитлера халех пырса çапмалла,—тесе çирĕплетсе каланă Каррэн.

Нью-Хейденри (Коннектикут штачĕ) электриксемпе радиопромышленноçри рабочисен профсоюзĕн конференцийĕнче «США-па Совет Союзĕ тата Англи хушшинче иккĕмĕш фронт тĕлĕшпе тунă килĕшĕве халех пурнăçа кĕртме» Рузвельта чĕнсе резолюци йышăннă. Çав митингра çар предприятийĕсенче ĕçлекен 50 пин рабочин представителĕсем пулнă.

Англири служащисем иккĕмĕш фронт уçассишĕн тухса калаççĕ

ЛОНДОН, августăн 12-мĕш. (ТАСС). Августăн 8-мĕшĕнче Лондонра государство служащийĕсен ассоциацийĕн делегачĕсен пухăвĕ пулса иртнĕ. Пухура йышăннă резолюцире служащисем вăрçă ĕçĕсене пулăшма сăмах пани çинчен каланă. «Вăрçăри лару-тăру йывăррине тата иккĕмĕш фронт уçас ĕçри йывăрлăхсене, çавăн пекех тата иккĕмĕш фронт политикине государство служащийĕсем енчен пур тĕрлĕ пулăшу та парса тăма кирлине эпир ăнланатпăр»,—тенĕ резолюцире.

Америка войскисен пысăк контингенчĕ Англие пырса çитни

НЬЮ-ЙОРК, августăн 12-мĕш. (ТАСС). Юнайтед пресс агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Англи порчĕсенчен пĕрине Америка войскисен пысăк контингенчĕ пырса çитнĕ.

Лăпкă океан çинчи вăрçă

МЕЛЬБУРН, августăн 9-мĕш. (ТАСС). Союзниксен пĕрлешÿллĕ командованийĕн штабĕ пĕлтернĕ тăрăх, Лăпкă океанăн кăнтăр-хĕвеланăç пайĕнче августăн 8-мĕшĕнче союзниксен тинĕс-çар вăйĕсем, сывлăш флочĕпе пĕр пулса, Соломон утравĕсен районĕ çине наступлени пуçланă. Тĕп вăйсене Тулагăна—Соломон утравĕсем çинчи чи пысăк тинĕс-çар базисенчен пĕрине, японецсем оккупациленĕскерне, пырса çапма янă. Йывăр бомбардировщиксен пысăк соединенийĕсем Саламауана тата Çĕнĕ Гвинея утравĕ çинчи Лаене атакăланă. Аэродромсемпе казармăсем çине, çар склачĕсем çине тата Японин портсенче тăракан карапĕсем çине бомбăсем пăрахнă.

Америка войскисем Соломон утравĕсем çине анни

ЛОНДОН, августăн 10-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Америка войскисем Соломон утравĕсем çине аннă.

Соломон утравĕсем патĕнчи çапăçусем

ЛОНДОН, августăн 11-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсен тинĕс-çар вăйĕсен главнокомандующийĕ адмирал Кинг пресс-конференцире тухса каласа çапла пĕлтернĕ: Соломон утравĕсем çине десант антарассине пурнăçа кĕртнĕ çĕрте çак операцие кĕтмен çĕртен туса иртерни пулăшнă. Тулага районĕнчи хаяр çапăçусем халĕ те пыраççĕ. Вĕсем мĕнле пулса пыни çинчен калакан тĕплĕ хыпарсем çук-ха, анчах та çакă паллă: унта тăшманăн нумай самолечĕсене пĕтерсе тăкнă тата унăн чылай карапĕсене стройран кăларнă. Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсен, нумай пулсан та, пĕр крейсер пĕтнĕ. Тепĕр икĕ крейсера, пĕр транспорта тата икĕ эсминеца сиенленĕ.

Адмирал Кинг каланă тăрăх, японецсем Соломон утравĕсемпе США-на Австралипе тата Çĕнĕ Зеландипе çыхăнтарса тăракан коммуникаци линийĕсем çинче наступлениллĕ операцисем тунă çĕрте база вырăнне усă курма шутланă.

— Çав операцин пĕлтерĕшĕ çакăнта пулса тăрать,—тенĕ Кинг,—эпир пуçарулăха малтанхи хут хамăр алла илтĕмĕр тата наступление куçрăмăр.

НЬЮ-ЙОРК, августăн 11-мĕш. (ТАСС). Юнайтед пресс агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Лăпкă океан çинчи флотăн командующийĕ адмирал Нимиц çапла каланă: Соломон утравĕсем патĕнчи операцисенче хĕçпăшалăн çĕнĕ тĕслĕхĕсем тата çĕнĕ соединенисем çапăçăва кĕреççĕ, тенĕ.

* * *

Соломон утравĕсем Лăпкă океанăн кăнтăр-хĕвеланăç пайĕнче çурçĕр-хĕвелтухăç Австрали çывăхĕнче вырнаçса тăраççĕ. Утравсен пĕтĕм лаптăкĕшĕ—17.000 квадратлă километр; унта 200.000 çынна яхăн, пуринчен ытларах меланезийски расăсем, пурăнаççĕ. Соломон утравĕсем çинче вырнаçса тăракан самолетсем Лăпкă океанăн анлă талккишĕсене тата Австрали патне çурçĕр-хĕвелтухăç енчен пымалли вырăнсене контрольлесе тăма пултараççĕ. Утравсем таврашĕнче суднăсем тăмалли лайăх хÿтĕленĕ вырăнсем пур. Халĕ çапăçу саралса кайнă Тулага утравĕ архипелагăн кăнтăр пайĕнчи центрта вырнаçса тăрать. Соломон утравĕсен ытларахăш пайне Англия тытса тăрать, икĕ утравĕ Австралин мандатнăй территорийĕсем пулса тăраççĕ.

Германие хирĕçле выступленисем Болгарире

ЖЕНЕВА, августăн 10-мĕш. (ТАСС). Продовольстви тĕлĕшпе лару-тăру Болгарире кунран-кун йывăрланса пырать. Германия кунтан тырпул, ашкакай, сĕт-çу тата ытти тĕрлĕ продовольстви таварĕсем çаплах турттарa-турттара каять. Болгари халăхне выçă тăратса хăварать.

Гитлеровецсем Болгарире хуçаланнă пирки халăх хăй тарăхнине уççăнах палăртма тытăнать. Фашистла оккупантсем çине халăхăн тĕрлĕ сийĕсем тăшманла пăхаççĕ. Çавăн пек тăшманла пăхнинчен вырăнĕ-вырăнĕпе уççăнах демонстрацисем пуçланса каяççĕ.

Полици çавнашкал демонстрацисене хĕçпăшалпа салата-салата ярать. Анчах çавăн пек террора пăхмасăрах, халăх кăмăлсăрланни, тарăхни татах та ытларах саралса пырать. Борис патша коллективсенчен тата уйрăм çынсенчен нумай çырусем илни çинчен пĕлтереççĕ.

Англипе Германи хушшинчи сывлăшри вăрçă

ЛОНДОН, августăн 10-мĕш. (ТАСС). Августăн 10-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле бомбардировщиксен соединенийĕсем Германин чугунçул тата промышленность центрĕ пулса тăракан Оснабрюк хули çине тата çурçĕр-хĕвеланăç Германин ытти объекчĕсем çине вĕçсе пырса тапăннă.

Англин бомбардировщикĕсем çавăн пекех тата Гаврти доксем çине, Голландипе Бельгири аэродромсем çине те вĕçсе пырса тапăннă.

Августăн 10-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле Англин кăнтăр çыранĕ çийĕнче Германин нумай мар самолечĕсем курăннă. Кунсăр пуçне, противникăн ытти самолечĕсем хĕвелтухăç çыран урлă каçса çурçĕр-хĕвеланăç Англи çине вĕçсе пынă. Тĕрлĕ пунктсем çине бомбăсем пăрахнă. Бомбăсем ÿкнипе пулă хăшпĕр сиенсем пулнă тата халăх хушшинче нумаях мар жертвăсем пур.

Англи авиацийĕ Майнц çине вăйлăн тапăннă

ЛОНДОН, августăн 12-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, августăн 12-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле Англи бомбардировщикĕсен пысăк соединенийĕсем Майнц хули çине вĕçсе пырса тапăннă. Малтанхи хыпарсем çав тапăну питех те ăнăçлă пулни çинчен калаççĕ.

Рейнпа Майн юханшывĕсем пĕрлешнĕ çĕрте вырнаçнă Майнц хули транспорт тĕлĕшпе паха центр пулса тăрать. Майнцри промышленность предприятийĕсен шутĕнче вагонсем тăвакан заводсемпе хими завочĕсем пур.

Авиаци министерстви çапла пĕлтерет: августăн 11-мĕшĕнче противникăн самолечĕсем кăнтăр Англири пĕр хула çине, çавăн пекех тата кăнтăр-хĕвелтухăç çыранра вырнаçнă тепĕр хула çине те бомбăсем пăрахнă. Хăшпĕр сиенсем кÿнĕ, жертвăсем пур.

Англин „Игл" авианосецĕ пĕтни

ЛОНДОН, августăн 12-мĕш. (ТАСС). Англин тинĕс министерстви çапла пĕлтерет: Вăтаçĕр тинĕсре противникăн подводнăй лодки Англин «Игл» ятлă авианосецне путарнă.

Индири лару-тăру

ЛОНДОН, августăн 12-мĕш. (ТАСС). Ĕнер Делипе Бомбей хулисен хăшпĕр районĕсенче йĕркесĕрлĕхсем малалла пулса пынă. Темиçе демонстраци пулса иртнĕ. Хулари чылай кварталсенче çыхăну татăлнă. Халăх ушкăнĕсем полици çине чулсемпе пенĕ. Полици, демонстрантсене резина патаксемпе тата куççуль юхтаракан газсемпе салатса яма хăтланса пăхнă хыççăн, перекен хĕçпăшалсемпе усă курма тытăннă. Хăшпĕр районсене винтовкăсемпе тата пулеметсемпе хĕçпăшалланнă войскăсене чĕнсе пынă. Вилнисем пур.

Йĕркесĕрлĕхсем пуçланнăранпа августăн 11-мĕшĕнчи каçчен Бомбейра 30 çынна вĕлернĕ. Кунсăр пуçне 250 çынна амантнă тата 500 çынна ытла арестленĕ. Пуна тата Ахмедабад хулисенче колледжсемпе шкулсенчи студентсемпе вĕренекенсем забастовка пуçласа янă. Ахмедабадра халăхсен ушкăнĕ полици участокне вут тĕртнĕ. Полици халăха пăшалсенчен персе сапаласа янă, çавна пула вилнисемпе аманнисем пур. Демонстрантсем баррикадăсем тума хăтланса пăхнă хыççăн власçем халăха пĕр сехет хушши урама тухма чарнă.

«Ньюс кроникл» хаçатăн корреспонденчĕ Бомбейран çапла пĕлтерет: ĕнерхи кун хушшинче хулари лару-тăру татах та ытларах начарланнă. 300 пин рабочи ĕçлекен районра мĕнпур предприятисенчен 80 процентĕ ĕçлеме чарăннă.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

ВНИМАНИЮ ПОДПИСЧИКОВ

Открыт прием подписки на ежедневный выпуск «От Советского Информбюро». Подписка принимается только от коллективов учреждений и заводов г. Чебоксар в пределах лимитов.

Подписка на август принимается до 14/VIII с. г.

«Союзпечать».

ЧУВАШСКИЙ ГОСУДАРСТВЕННЫЙ ПЕДАГОГИЧЕСКИЙ ИНСТИТУТ НАРКОМПРОСА РСФСР в г. Мариинском Посаде

продолжает прием заявлений на I курсы всех факультетов Педагогического и Учительского институтов.

Зачисление в число студентов лиц, принимаемых в Институты без испытаний, производится с 1 августа; начало вступительных испытаний с 17 августа в 9 часов утра.

Подробнее о правилах приема см. газету «Красная Чувашия» от 6 июня с. г. Дирекция.

2—2.

Срочно требуются: инженеры, механики, электромеханики, слесаря, экономисты, бухгалтера, счетоводы, зав. хозяйством, телефонистки, мастер под'ездных путей, рабочие квалифицированные и неквалифицированные, работники охраны.

За справками обращаться: Чебоксары, ул. Байдукова, 8, отдел кадров, телефон 3—83.

ОБЪЯВЛЕНИЕ

Организуется филиал Горьковского электротехнического техникума НКЭП.

Техникум без отрыва от производства готовит техников-технологов

Организуется филиал Горьковского электротехнического техникума электриков по аппаратостроению.

Срок обучения 4 года.

В техникум принимаются лица без ограничения возраста, имеющие образование в об'еме 7-ми классов средней школы.

Заявления о зачислении в техникум подаются на имя заведующего филиалом с приложением автобиографии свидетельства об образовании, свидетельства о рождении, справки лечебного учреждения о состоянии здоровья, справки об отношении к воинской обязанности (для военнообязанных), трех фотокарточек.

Вместо свидетельства о рождении, граждане достигшие 16-летнего возраста, пред'являют паспорта при личной явке.

Поступающие подвергаются приемным экзаменам по программе 7-го класса средней школы:

1) По русскому языку (письменно и устно), 2) по математике (письменно и устно), 3) по Конституции СССР.

Окончившие 7 классов средней школы с отметкой «отлично» по основным предметам, а также окончившие 7 классов средней школы в 1941 году и 1942 г. с отметкой «отлично» и «хорошо» по основным предметам, принимаются в техникум без приемных испытаний. Лица, сдавшие экзамен за 7 класс средней школы в 1941 и 1942 г. не на «отлично» и «хорошо», принимаются в текущем при наличии в нем свободных мест без экзаменов, а при недостатке свободных мест—с проведением конкурсных экзаменов.

Приемные экзамены будут проводиться с 20 по 28 августа.

Лица, окончившие 9 и 10 классов средней школы, принимаются без приемных экзаменов на 2-й курс.

Производится прием заявлений на 3-й курс от лиц, имеющих соответствующие знания.

Оплата за обучение в техникум на общих основаниях.

Заявления принимаются до 17 августа ежедневно от 18 час. до 19 час., в помещении бюро пропусков (ул. К. Маркса, 80).

Зав. филиалом.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 6, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарĕн — 4—26, пропогандăпа парти пурнăç пайĕн — 3—99, ялхуçалăх пайĕн — 5—31, издательство конторин — 0—23.

НТ 254. Типография №1 Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР, Заказ № 2, Ф 6, 58 84 п. л.